42-86
5
23 X 1942
Подпись

# 1942 ÇУЛТИ КĔРКУННЕ КОК-САГЫЗ АКСА ХĂВАРМА ПАНĂ АГРОУКАЗАНИСЕМ

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР 1942

Редактор выпуска *И. П. Павлов-Пинер*

НТ 1078. Подп. к печ. 12/X 42. Объем 0,5 п/л. З. 663. Т. 1500

Тип. №1 Управления полиграфпром. при СНК ЧАССР.

## 1942 ÇУЛТИ КĔРКУННЕ КОК-САГЫЗ АКСĂ ХĂВАРМА ПАНĂ АГРОУКАЗАНИСЕМ

Кок-сагызран çĕршыв оборони валли каучук туса кăлараççĕ. Кок-сагызăн типĕтнĕ тымарĕсенче каучук 10 процент таран тата ытларах та пулать.

Кашни колхоз гектартан 25—30 центнер тата ытларах та чĕрĕ тымарсем пуçтарса илме пултарать.

Кок-сагыз акса тума тата унăн тухăçлăхне хăпартма Правительствăпа парти колхозсемпе колхозниксене вăйлăн пулăшаççĕ. Укçан хаклă тӳленисĕр пуçне тата преми-надбавкăсем панисĕр пуçне, гектартан 6 центнер ытла тымар туса илекенсене государство хакĕпе резина япаласем те (калушсем, атăсем тата ыттисем) параççĕ.

Колхозсенче те, колхозниксен пахчисенче те кок-сагыза заданисĕрех акса хăварма тăрăшмалла. Заданисĕр акса тунă кок-сагызшĕн те резина япаласем параççĕ. Акă, сăмахран, 1942

çулта Вăрмар районĕнчи Арапуç колхоз заданисĕр акнă 0,10 гектар çинчи кок-сагыз тымарĕсене государствăна сутнăшăн 26 мăшăр калуш илнĕ.

1. Кок-сагыз вăл—нўрĕ тăпрана, ўсен-тăрана ансат тăрантаракан япаласемпе пуян тăпрана питĕ юратакан культура. Кок-сагыз тымарĕсене тата вăррине лайăх çемçетнĕ, тислĕклĕ, çителĕклех кăпка, тарăн сухалама юрăхлă, хытса ларман, çĕр сийĕсем хушшинчи шыв çывăхра выртакан çĕр çинче пысăк тухăçлă туса илме пулать. Çаксене шута илмелле те ĕнтĕ кок-сагыза хĕллене акса хăвармалли çĕр участокĕсене уйăрнă чухне.

2. Кок-сагыза хĕле хирĕç акса хăварма, чи малтан, пахчасенчи çĕрсемпе, тислĕк тăкнă çĕртме çĕрĕпе, кантăр, махорка, пахча çимĕçсем хыççăнхи çĕрсемпе тата аванлатнă торфяниксемпе усă курмалла.

Кун пек çĕрсем çителĕклĕ мар пулсан, кок-сагыза çĕрулми, кишĕр-кăшман, силослăх культурăсем хыççăнхи çĕрсем çине те акма юрать. Анчах ун пек çĕрсем çуркунне тислĕк çителĕклĕ таран тăкса хăварнăскерсем пулмалла. Ун пек çĕрсем те çук пулсан, ыраш хыççăнхи тислĕклĕ çĕр çине акма юрать.

Тислĕк тăкса çемçетмен ырхан, хытса ларакан çĕрсем çине кок-сагыз акма юрамасть.

Çавăн пекех çуркунне шыв илекен вырăнсем çине те кĕркунне кок-сагыз акма юрамасть. Шыв илекен вырăнсем çине кок-сагыз çуркунне кăна акас пулать.

Кок-сагыз акма уйăрнă вырăнсем тикĕс, çумкурăкĕсенчен, ӳсентăрансене сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăсенчен таса пулмалла.

3. Кĕркунне кок-сагыз акса хăварма уйăрнă çĕрсене, вăл çĕрсем çинче йышăнса тăракан культурăсене пухса илнĕ хыççăн çийĕнчех тарăнăн сухаласа пăрахмалла; анчах та сухаласа пăрахма ниепле те сентябрĕн 20-мĕшĕнчен кая юлма юрамасть. Суха тунă вăхăтрах пĕр гектар çĕр çине 40 тоннăран кая мар лайăх пулса çитнĕ тислĕк тата минеральнăй удобренисем тăкмалла: 7—8 центнер суперфосфат е 8—10 центнер фосфорит çăнăхĕ; 1,5—2,0 центнер калий тăварĕ е 5—7 центнер кĕл; 1,5—2,5 центнер сульфат-аммоний е 3—4 центнер лайăх вĕтетсе хатĕрленĕ, типĕтнĕ кайăк тислĕкĕ. Çак удобренисене тăкаччен малтан лайăх вĕтетсе çитермелле, вĕсене çĕр çине пĕр тикĕс сапса тухмалла. Сухаланă хыççăнах сӳрелесе пăрахмалла.

4. Кок-сагыз акас умӗн 15—20 кун малтан ҫак участока культиваци тумалла, муклашкасене лайӑх ваклантарса сӳрелемелле, ҫиелтен шлейфпа якатса тухмалла.

Акма вӑхӑт ҫитнӗ тӗле те ҫӗр лайӑххӑн пусӑрӑнса ҫитмен пулсан, йывӑҫ катокпа якатса тухмалла. Пусӑрӑнса ҫитмен ҫӗр ҫине акма юрамасть. Катокпа якатса тухнӑ хыҫҫӑн тепӗр хут сӳрелемелле е шлейфпа якатса тухмалла. Кӑна ӗнтӗ тӑпран ҫиелти сийне кӑпкалатас шутпа тӑваҫҫӗ.

Тӑпра ытла та нӳрлӗ тӑрать пулсан, кун пек чухне катокпа якатма юрамасть.

5. Кӗркунне акнӑ чухне типӗ вӑрлӑхсемпе кӑна усӑ кураҫҫӗ, акассине питӗ кая юлса кӑна акаҫҫӗ. Кӗркунне акса хӑварнӑ кок-сагыз хӗле хирӗҫ шӑтмасӑр юлмалла. Ҫавӑнпа та кок-сагыза кӗркунне ҫанталӑк пӗр вӗҫрен сиввӗ тӑма пуҫласан кӑна акмалла. Пӗтӗм ака ӗҫне пӗр-ик кун хушшинче туса пӗтермелле.

Акакан кок-сагыз вӑрлӑхӗ пӗтӗмпех шӑтса тухать пулсан, пӗр гектар ҫӗр ҫине 2 килограмм акмалла, начартарах шӑтать пулсан, акмалли нормӑна ҫак виҫерен ӳстермелле.

Пӗр тикӗс акмалла тӑвас тесен, кок-сагыз вӑрлӑхне акас умӗн вир е кантӑрвӑрри хуппипе

хутăштармалла. Вир хупписемпе кантăрвăрри хупписене кок-сагыз вăрлăхĕпе хутăштараччен малтан, вĕсем ҫинчи ҫумкурăк вăрлăхĕсене пĕтермешкĕн, ăшаламалла.

6. Кĕркунне акнă чухне кок-сагыз вăрлăхне тăпра ăшне 1 сантиметр тарăнăш вартса хăвармалла.

Кок-сагыза ятарласа тунă дисковăй сошниклĕ сеялкăсемпе акмалла; сошниксем ҫумĕнче тарăна кайма чаракан ребордăсем пулмалла.

2—3 миллиметр хулăнăш, 40 миллиметр сарлакăш полосаллă тимĕр илсе кашни сошник пуҫне икшер реборда хатĕрлеҫҫĕ. Ребордăсене сошник дискисен тулаш енчен, 25 миллиметр сарлакăш, 3—4 миллиметр хулăнăш тимĕртен тунă тăвата кĕтеслĕхпе хытарса лартаҫҫĕ. Кĕтеслĕхсен айккисем 3,5 тата 4,5 сантиметр пулмалла. Кĕтеслĕхсене реборда ҫумне кĕске енĕпе ҫыпăҫтарса лартаҫҫĕ. Ребордăсене сошник дискин кастарса пыракан хĕрринчен 15—20 миллиметр инҫетерех питĕ тĕрĕс вырнаҫтарса ҫирĕплетмелле. Ребордăсене ҫыпҫăнакан тăпраран тасатма ятарласа тимĕр таткисем ҫыпăҫтарса хураҫҫĕ.

7. Колхозра дисковăй сошниклĕ сеялкăсем ҫук, анкер сошниклĕ сеялкăсем кăна пур пул-

сан, кун пек сеялкăсемпе те усă курма пулать. Анчах вĕсене, çакăнта асăннă пекех, обязательно кок-сагыз акма юрăхлă туса майлаштарас




1-мĕш ўкерчĕк. Вăрлăх тарăна каясран чараканни.
а—каток, б—поводок, в—кронштейн, г—сошник, д—сăнчăр, е—205ункă.

пулать: сошниксем çумне вăрлăха тарăна кайма чарса тăракан катоксем вырнаçтармалла.

Вăрлăха тарăна кайма чаракан 22—25 сантиметр диаметрлă катоксене 7—8 сантиметр хулăнăш хăмасенчен тума пулать.

Каток тавра хĕçтимĕр çапса хумалла. Каток варринче 12 миллиметр пысăкĕш шăтăк тумалла, çак шăтăка пĕр миллиметр хулăнăш тимĕртен тунă втулка хытарса лартаççĕ. Втулка тăрăшщĕ каток хулăнăшĕ чухлĕ пулмалла, урăхла кала-

çан, 7—8 сантиметр. Катоксене 10 миллиметр хулăнĕш, 12 сантиметр тăрăшĕ чухлĕ тĕнĕл çине тăхăнтарса лартаççĕ. Тĕнĕлĕн икĕ вĕçĕнче те винтăллă нарез тăваççĕ, тĕнĕлĕн винтăллă нарез тумасăр юлакан пайĕн вăрăмăшĕ каток хулăнăшĕнчен 2 миллиметр ытларах пулмалла. Тĕнĕле каток втулки ăшне тăхăнтарса лартаççĕ, каток вĕçĕсене вара гайкăсемпе пăрса хытараççĕ. Каток ирĕклĕн çавăрăнмалла.

Сошник поводокĕ çумне катока 25—4 миллиметр танăш полосаллă тимĕртен тунă пĕкĕ евĕрлĕ икĕ кронштейнпа хытарса лартаççĕ. Кронштейнăн аял енĕнче, авăнчăк тĕлĕнче каток тĕнĕлĕн диаметрĕнчен пăртак пысăкрах çавракá шăтăк тăваççĕ, кронштейнăн çӳлти вĕçĕсенче кронштейна поводокпа пĕрлештерекен болтсем валли варак тăваççĕ. Çак вараксем сошниксене мĕн тарăнăш ямаллине йĕркелесе пыма кирлĕ. Çавăнпа та вараксем йĕркелесе пыма кирлĕ пысăкĕш пулмалла. Кронштейнсене тĕнĕл вĕçĕсем çине тăхăнтарса лартаççĕ те, пирвайхи гайка çумне иккĕмĕш гайкăпа хĕстерсе çыпăçтараççĕ. Вараклă кронштейнсен вĕçĕсене поводок çумне икĕ болтпа хытарса лартаççĕ. Катоксем лартма вăрăм поводоклă сошниксем илеççĕ.

Каток ҫумне ҫыпҫӑнакан тӑпрана тасатма сошника тытса тӑракан вырӑнта, кронштейн авӑнчӑкӗ тӗлӗнче, поводок ҫумне тасатмалли калик



2-мӗш ӳкерчӗк. Дискӑллӑ сошник ребордӑсемпе (вӑрлӑх тарӑна каясран чараканнисем) тата якатса пыракан катокпа пӗрле.

вырнаҫтарса лартаҫҫӗ, калик ниепле те катока ҫавӑрӑнма чӑрмантармалла мар.

Вӑрлӑха варӑнтарса хӑварма кашни сошник хыҫне 40 сантиметр тӑрӑш поводокран (сӑнчӑртан) ункӑ кӑкарса яраҫҫӗ.

Сеялкăна вăрлăхсене кирлĕ таранăша варăн-тармалла туса майлаштарнă чухне сошниксен айне пĕр тикĕс хăма хураççĕ, катоксене сошник пуçĕнчен 1 сантиметр çӳлĕрех хăпартаççĕ, кронштейнпа поводока тыттарса тăракан болт-сене хыттăн çирĕплетсе лартаççĕ.

Кок-сагыза тарăна кайма чарса тăракан ха-тĕрсемсĕр акма юрамасть.

8. Сеялкăсем çук пулсан, вĕсене çывăхри колхозсенчен те илме май çук пулсан, кун пек чухне алăпа та акма юрать. Акас умĕн малтан ана çинче ретсем хушшисене пĕр пек хăварса, тӳрĕ, тарăн мар йĕрсем туса тухаççĕ. Вăрлăх пĕр виçеллĕ акăнмалла пултăр тесе, акма уйăрнă вăрлăха, йăрансен хисепĕ тăрăх, пĕр пек пайласа уйрăм пакетсене хураççĕ. Каш-ни йăран пуçне пĕр пакет пулмалла. Акнă чух-не çак пакетсене акакансене валеçсе параççĕ. Пĕр пакет пĕр йăран акса тухма çителĕклĕ пулмалла.

9. Ретсем хушши 44,5 сантиметр пулмалла. Кирек мĕнле майпа акнă чухне те ретсем тӳрĕ тата ретсем хушшинчи пушă вырăн сарлакăшĕ пĕр пек пулмалла. Малтанхи касă тунă чухне сеялкăна паллăçем лартса тухнă йĕр тăрăх илсе пымалла.

10. Лашаллă сеялкăпа акнă чухне вăрлăх ешчĕкĕнчи 12 шăтăкран 8 шăтăкне питĕрсе лартаççĕ, 2, 5, 8, 11-мĕш шăтăксене (аппаратсене) кăна хăвараççĕ. Сеялкăна акма майлаштарнă чухне вăл 1,8 метр сарлакăш касăпа пынине хисепе илмелле. Малти урапасене тĕнĕл тăпсинчен шутласа икĕ еннелле 78 сантиметр куçарса лартаççĕ. Ешĕк ăшне фанер е хăма татăкĕсенчен касса пӳлĕмсем (бункерсем) тăваççĕ. Кок-сагыз вăрлăхĕ акакан коробкăсене лайăх юхса антăр тесе, хăма татăкĕсене акакан аппаратсен кашнин икĕ енне чалăшшăн вырнаçтарса лартаççĕ. Хăма татăкĕсене таччăн çыпăçтарса планкăсемпе хытарса лартаççĕ. Планкăсене пĕчĕк пăтасемпе çапса хураççĕ. Анкер сошниклĕ 13 ретлĕ сеялкăсенне 2, 5, 9, 12-мĕш сошниксене уçă хăвараççĕ, ыттисене питĕрсе лартаççĕ.

11. Акас умĕн сеялкăн малти урапisене тĕрĕс вырнаçтарса лартмалла, сошниксене акмалли ретсен сарлакăшне кура тĕрĕс сиктерсе вырнаçтармалла, сеялкăна акмалли нормăна лартмалла, сошниксем тĕрĕс ĕçленине кашнине уйрăмăн тĕрĕслемелле. Акакан аппарата çиелтен акмалли виçене лартмалла.

12. Акнă чухне сеялкăн акакан аппарачĕ мĕнле ĕçленине лайăх асăрхаса пымалла, кассăн-

кассăн акăнмасăр юлни, сошник çумне тăпра хытса ларни, касă хушши хăварни пулмалла мар.

13. Акнă хыççăн ретсем çине çĕрĕк тăпра е торф тĕпренчĕкĕсем сарса тухмалла, сарăм хулăнăшĕ 1 сантиметр, сарлакăшĕ 7—8 сантиметр пулмалла. Пĕр гектар çĕр çине çĕрĕк тăпра е торф тĕпренчĕкĕ 5—6 тонна кирлĕ. Çакăн пек сарса тухни вăл çуркунне çитсен çийĕнчех шаровка тума май парать, тăпрана хытса ларасран сыхлать, çуркунне калчасем тухассине хăвăртлатать.

Çĕрĕк тăпра е торф тĕпренчĕкĕсем сарас ĕçе çăмăллатас шутпа торфоприсыпалка текен япала туса хатĕрлеççĕ. Торфоприсыпалкăна ещĕкрен тăваççĕ. Унăн тăршшĕ сеялка сарлакăшĕпе тан, тарăнăшĕпе сарлакăшĕ 40 сантиметр пулмалла. Ешчĕк тĕпĕн варринче 4 сантиметр хулăнăш тимĕр вал пулать. Валăн икĕ енне ешчĕкĕн тулаш енчен çирĕппĕн 45 сантиметр диаметр виçеллĕ тимĕр урапа хытарса лартаççĕ. Ешчĕк ăшĕнче вал çумне, ĕçлекен сошниксен шучĕ тăрăх, шăллă шестернесем 4 çирĕплетсе лартаççĕ. Ещĕкре шестернесем тĕлĕнче вараксем тăваççĕ, çав вараксен айне распределитель-

ная доска текен ҫăмăл хăма ҫыпăҫтарса хураҫҫĕ. Ҫĕр ҫинчен ещĕк 10 сантиметр ҫӳллĕшĕнче тăрать. Торфоприсыпалкăна сеялка ҫумне хыҫала 20 сантиметр инҫетерех ҫирĕплетсе лартаҫҫĕ. Акнă чухне сеялка хăй хыҫҫăн торфоприсыпалкăна туртса пырать, унăн торф саптаракан механизмне ĕҫлеттерет. Механизма 1 сантиметр хулăнăш сапмалла туса майлаштарса лартмалла.

14. Кок-сагыза хĕле хирĕҫ акса хăварас пĕтĕм ĕҫе райҫĕрĕҫ пайĕпе МТС агрономĕсем ертсе пыни тăрăх туса ирттермелле.

15. Хĕле хирĕҫ акса хăварма хатĕрленнипе пĕр вăхăтрах, тислĕк тăкса ҫемҫетнĕ лайăх ҫĕрсене ҫитес 1943 ҫулти ҫуркунне акса хăварма хатĕрлемелле. Ҫуркунне акма уйăрнă участоксем ҫинче сентябрĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр кĕрхи ҫĕртме сухи туса ирттермелле. Кĕрхи ҫĕртме сухи тунă вăхăтрах тислĕк тата минеральнăй удобренисем тăкмалла: пĕр гектар ҫине 40 тонна тислĕк; минеральнăй удобренисем—ҫӳлте асăннă норма чухлĕ. Кĕрхи ҫĕртме сухи тунă анасене ҫӳрелемесĕр хăвармалла.

16. Хĕле хирĕҫ акса хăварнă плантацисем ҫинче, ҫавăн пекех ҫуркунне акма хатĕрлесе

хунӑ участоксем ҫинче хӗллехи вӑхӑтра юр тытса юлмалла. Юр тытма щитсемпе, ҫапӑсемпе, улӑм кӗлтисемпе усӑ курмалла.

**Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ.**
**„Расткаучук" конторӗ.**

**АГРОУКАЗАНИЯ**

**по проведению подзимнего посева кок-сагыза осенью 1942 года**

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары — 1942